Ырă хыпар

# Кĕлĕ çурчĕ уçăлчĕ

Иртнĕ кунсем Муркаш районĕн çыннисемшĕн, район центрĕпе таврари ялсенче пурăнакансемшĕн, Турра ĕненекенсемшĕн яланлăхах асра юлĕç. Мĕншĕн тесен майăн 24-мĕшĕнче, шăпах Çимĕк уявĕ умĕн, Муркашра кĕлĕ çурчĕ хăйĕн алăкĕсене уçрĕ.





Кĕлĕ çурчĕ ĕçлеме тытăнни мĕншĕн çапла пысăк пĕлтерĕшлĕ-ха? Мĕншĕн тесен çак вăхăта çитсе те республикипе пĕртен-пĕр район центрĕнче – Муркашра кăна чиркӳ пулман. Хальхи вăхăтра укçа çитсе пыман чухне çĕнĕ объект çĕклеме епле йывăрри пурне те паллă. Муркашсен те кĕлĕ çурчĕ хута каясса вунă çула яхăн кĕтме тиврĕ. Мĕншĕн тесен çĕнĕ чиркӳ никĕсне çавăн чухнех хывма пуçланăччĕ.

Строительство ĕçĕсем те пуçланнă-пуçланманах чарăнса ларнăччĕ. Анчах та халăх сурать кӳлĕ пулать, тесе ахаль каламан. Тӳрех çĕнĕ чиркӳ туса лартма май çукккине кура кĕлĕ çуртне уçма май килнĕ. Ăна вара çур çул хушшинче çĕкленĕ, хăт кĕртнĕ. Апла пулсан пуçламăшĕ пур, Муркашра чиркӳ пуласса та кĕтсе илĕпĕр. Ял çыннисем те, тĕрлĕрен предприятисемпе организацисем те, предпринимательсем те, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин хăйсем те укçа-тенкĕпе тата ытти енпе пысăк пулăшу кӳнĕ. Кĕлĕ çурчĕн настоятелĕ Федор атте вĕсене пурне те турра ĕненекенсем ячĕпе тав сăмахĕ каларĕ.

Кĕлĕ çуртĕнче ăна тасатнă чаплă лару-тăрура кĕлĕ иртрĕ. Унта район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хутшăнчĕ, Муркашра, ытти ялсенче пурăнакансем те йышлă пулчĕç.



Кĕлĕ çурчĕ хута кайни çынсен чунне пуянрах тăвасса, çынлăх кăмăл-сипет пахалăхĕн енĕсене хаклама вĕрентессе, хальхи вăхăтра пирĕн пурнăçра кашни утăмрах тĕл пулакан тискерлĕхпе чунсăрлăх тĕслĕхĕсене чакарса пыма пулăшасса шанас килет.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: кĕлĕ çуртĕнче ăна тасатнă ятпа кĕлĕ ирттернĕ вăхăтра.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Çамрăк çул-йĕр инспекторĕсен слечĕ

# Виççĕмĕш вырăна тивĕçрĕç



Майăн 19-мĕшĕнчен тытăнса 21-мĕшĕччен ачасен Атăл тепĕр енче вырнаçнă «Волна» сывлăх сиплевĕн лагерĕнче çамрăк çул-йĕр инспекторĕсен республикăри 17-мĕш слечĕ иртрĕ. Унта республикăран 26 команда хутшăнчĕ.

Район чысне кунта районти конкурсра апрелĕн 13-мĕшĕнче чи лайăх результатсем кăтартнă Муркаш шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем хӳтĕлерĕç. Унта хутшăнакансем çул-йĕр правилисене пĕлессипе, «Автохула», «Медицина тата страховани» конкурссенче, баннерсен ăмăртăвĕнче тата ытти енпе вăй висрĕç.

Юлашки кунне Шупашкарта Пионерсен керменĕнче çĕнтерӳçĕ-командăсене парнесемпе кубоксем парса чысларĕç. Муркаш шкулĕн вĕренекенĕсем Наталия Иванова, Таисия Костина, Валерий Николаев, Володя Рожков уйрăмах ăста пулчĕç. Пĕтĕмĕшле вара пирĕн команда 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, Çĕмĕрле хулипе Шупашкар хулине кăна иртерсе ячĕ.

Командăна слета хатĕрлессипе унăн ертӳçи Г.А. Малыгин пысăк тӳпе хывнă. Кунпа пĕрлех спонсорла пулăшупа «Моргаушрайбыт» предприяти, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ тивĕçтернĕ. Командăна хатĕрлессипе тата çамрăк çул-йĕр инспекторĕсен конкурсне ирттерессипе патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕ те хăйĕн тӳпине хыврĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн уйрăмĕн пропаганда инспекторĕ, милици лейтенанчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: слет вăхăтĕнче.**

Евтихий Андреев çуралнăранпа 95 çул çитнĕ май

# Муркашсен председателĕ

Муркашсен председателĕ тесен аслăрах ăрури çынсемпе пĕрлех 50- 60-мĕш çулсенче çуралнисем те сăмах "Знамя труда" хуçалăх ертӳçи Евтихий Андреевич Андреев çинчен пынине ятпа каламасăрах пĕлетчĕç теме юрать. Вăл çак колхоза 1951-1981 çулсенче ертсе пынă. Унăн ячĕ районта кăна мар, республикăпа ытти юнашар регионсенче те питĕ паллă пулнă вăл вăхăтра. Хуçалăх çитĕнĕвĕсене кура ăна Раççей тата республика шайĕнчи депутат пулма темиçе хутчен те суйланă. Нумай хутчен председатель район шайĕнчи депутат пулнă. 1966 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче "Знамя труда" хуçалăх ертӳçине Е.А. Андреева Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă.

Нумайăшĕн асĕнче Евтихий Андреевич паллă йĕр хăварнă, хăйне тӳрремĕнех пĕлмен çынсен асĕнче те вăл хăйĕнчен те, ыттисенчен те çирĕп ыйтакан, çав вăхăтрах хăйне колхозпа колхозниксен пурнăçĕнчен пĕр шит те уйăрман, çĕр ĕçне чунтан юратакан ертӳçĕ репутацийĕпе юлнă. Çавăнпах ĕнтĕ 1981 çулхи çĕртме уйăхĕн 16-мĕшĕнче, вăл вилнĕ хыççăн темиçе кунтанах, колхозниксем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче, "Знамя труда" хуçалăха Е.А. Андреев ятне пама йышăннă. Хуçалăха ун ертӳçин ятне панă тĕслĕхсем историре час-часах тĕл пуласçĕ теме çук. Çакă та ĕнтĕ Е.А. Андреев чăнахах та питĕ пултаруллă, халăх хисеплекен председатель пулнине çирĕплетет. Ун чухнехи "Знамя труда" хуçалăхăн бригада членĕсем, дояркисемпе механизаторĕсем, шофер пулса ĕçленĕ çынсемпе халĕ пенси укçине хăйсене тивĕçекен чи пысăк тӳпи таранах илеççĕ. Куншăн та, паллах, вĕсем Евтихий Андреевича ырăпа асăнаççĕ: хăй вăхăтĕнче тӳрĕ ĕçпех лайăх ĕç кунĕ ĕçлесе илме условисем туса панăшăн...

1951 çул пуçламăшĕнче Е.А. Андреев Муркаш, Çĕньял, Шаптак, Çурлатри тата Малиновка ялĕсен пĕрлештернĕ хуçалăхне ертсе пыма пуçланă. Пĕрлештернĕ çĕрсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 2271 гектар пулнă, çав шутра сухаламалли çĕр – 1680 гектар.

Малтанхи правлени членĕсем Е.А. Андреев (председатель), Совет Союзĕн Геройĕ А.И. Воробьев (председатель çумĕ), З.М. Магаев (тĕп бухгалтер), В. Чубуков (счетовод) тата З. Синичкина (кассир) пулнă. Пĕрремĕш çур акине ăнăçлă ирттерес тĕллевпе колхозăн патшалăхран 90 пин тенкĕ ссуда илме тивнĕ. Йывăрлăхсем нумай пулнă, анчах çĕр ĕçченĕсем пуçа усса ларман. Хуçалăхра 9 уй-хир бригади йĕркеленĕ. Вĕсене П. Костин, А. Сильвестров, В. Любимов, А. Столбов, И. Магаев, И. Спаскин, В. Волков, М. Смирнов тата В. Федоров бригадирсем ертсе пыма пуçланă. Агроном ĕçне аслă пĕлӳ илнĕ специалист Е.А. Ильина кӳлĕннĕ.

Строительсен бригадисене йĕркеленĕ. Малтанхи икĕ бригадăна А. Илларионовпа А. Максимов ертсе пынă. Каярахпа П. Воробьевпа А. Дмитриев бригадисем хутшăннă. Атăл леш енче йывăçпа вутă хатĕрлес ĕçсене Ф. Киселев, П. Димитриев бригадирсем ăнăçлă туса пынă, çулсерен 1000 кубла метр ытла йывăç хатĕрленĕ.



Вăрçă хыççăнхи çулсенче общественă выльăх-чĕрлĕхе аталантарасси çине питĕ пысăк тимлĕх уйăрнă.

Муркашсен пĕрлештернĕ ĕне фермин заведующийĕ пулма П.П. Оньков ăста специалиста шаннă. Сысна фермин заведующийĕ пулса вара И.С. Огурцов ĕçлеме пуçланă, фермăна ăнăçлă ертсе пынă. Хăй ячĕллĕ велосипед-парнене тивĕçнĕ, ВДНХ кĕмĕл медальне те çĕнсе илме пултарнă.

Евтихий Андреевич председатель малтанласа уйрăмах сысна ĕрчетес ĕç çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Сăмахран, 1951 çултан пуçласа 1953 çул вĕçне çити сыснасен йышĕ 289 пуçран 436 пуçа çити ӳснĕ. 1952 çулта колхоз сысна ферминчен 260 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Ку вăл хуçалăхăн пĕтĕм тупăшĕн 39 проценчĕ пулнă. 1954 çулта вара çак кăтарту 400 пин тенкĕ патнелле кармашнă.

Паллах, пĕтĕм ĕçе зооинженери науки ыйтнă пек туса пыма тăрăшнă. Хуçалăхра зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курссем те ĕçленĕ, çак курссене пĕтерсен выльăх пăхакансене пĕрремĕш разрядлă ял хуçалăх мастерĕн аттестатне панă, ĕç укçине те ытларах тӳленĕ.

Муркашсен пĕр "вăрттăнлăхне" аса илтерни паян та ытлашши пулас çук (ку вăрттăнлăх наукăпа практика шайлашăвĕнче тăни паллă): Евтихий Андреевич опычĕпе, сыснасен каярахри тапхăрти ӳт хушаслăхĕ аван пултăр тесен, сысна çури икĕ уйăха çитнĕ тĕле унăн йывăрăшĕ 18-20 килограмран кая пулмалла мар. Кун пек вăрттăнлăхсем, ăнланмалла, сĕт суса илес ĕçре те, çĕр улмипе тыр-пул туса илес ĕçре те, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре те сахал мар пулнă Муркаш председателĕн. Ахальтен мар 50-мĕш çулсен çурринелле Муркашсен производство кăтартăвĕсем республикăри вăтам кăтартусенчен пур енĕпе те икĕ-виçĕ хут лайăхрах пулнă.

Тыр-пул пухса кĕртес ĕçре çухатусăр ĕçлеме пĕлнĕ: çурласемпе вырнă хыççăн тырă нумаях тăкăнса юлман, çĕмелсенче вара вăл лайăхрах пиçсе çитнĕ.

Хуçалăхăн хăйĕн электростанци пулнă, машинăпа трактор паркĕ хута кайнă, унта тимĕрçĕ лаççипе мастерской уçăлнă. Каярахпа колхоз территорийĕнче гараж, арман, пилорама туса лартнă. Çĕнĕ йышши ял хуçалăх техникине туянма май килсе пынă. Малтан илнисем МТЗ-2 тата виçĕ ДТ-54 тракторсем пулнă, вĕсемпе ĕççи вăхăтĕнче тăватă агрегат (кашни агрегатра икшер тракторист) сменăпа ĕçленĕ. Трактор бригадин бригадирĕн тивĕçĕсене вара нумай çул хушши Е.А. Ильина агроном пурнăçланă.

Председатель хăйне халăх пурнăçĕнчен уйăрас мар тенĕ. Çăмăл машинăпа та вăл пулчĕ-пулмарĕ уçă курман, колхоз территорийĕнче ытларах лашапа е çуран çӳренĕ. Нумайăшĕ 1964 çулхи раштав уйăхне халĕ те астăваççĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ, Андриян Николаев космонавт **(сăн ӳкерчĕкре)** Муркаша пĕрремĕш хут килсен, Муркаш председателĕ чаплă хăнана хура çуна çине лартса катаччи чуптарнă колхозăн "Бабочка" лашипе...

Хуçалăх Çурлатринчи шкулпа клуб çурчĕсене, фельдшер пункчĕпе хватерне хăй вăйĕпе туса лартнă. Вăтам шкулпа районти тĕп больницăна яланах пулăшса пынă. Лайăх ĕçлекен колхозниксене премисем, парнесем парса хавхалантарнă. Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне кашни çулах вăрçă участникĕсене хаклă парнесем (костюмсем таранах) парса чысланă. Çара каякан çамрăксене колхоз ăсату касĕсем тусах çар службине ăсатнă, вĕсене 100-шер тенкĕ таран укçа уйăрса панă. Вăл вăхăтра ку пысăк укçа шутланнă.

Е.А. Ильина агроном, П.П. Оньков ферма заведующийĕ, Е.Р. Орлова доярка, Н.Т. Тихонова бригадир Ленин орденне тивĕçнĕ, çĕршывăн тĕрлĕрен наградисемпе хисеплĕ ятсене тивĕçнисем хуçалăхра татах та нумай пулнă.

Дисциплина хуçалăхра çирĕп пулнă. Сăмахран, 70-мĕш çулсен варринелле, район масштабĕпе илес пулсан, кашни çул 500-е яхăн водительпе механизатор ӳсĕрле ГАИ аллине лекнĕ пулсан, вĕсен шутĕнче "Знамя труда" хуçалăхран пĕр водитель те йĕркене пăсман çулсем те тăтăшах пулнă. Ăçта çакăн вăрттăнлăхĕ? Председателĕн дисциплинăпа воспитани витĕмĕнче кăна-и е нумай ĕçлесе илме пуçланă водитель хăйне, хăй ĕçне, сывăх çыннисене хисеплес туйăмĕ ӳснинче-и?

Евтихий Андреевич хăй хыççăн колхоз счечĕ çине 3 миллион тенкĕ ытла укçа хăварма пултарнă. Пĕлекенсем каланă тăрăх, ку укçапа вăл вăхăтра 100 ДТ-75 трактор туянма пулнă. Чăн-чăн предприниматель...

Е.А. Андреев опычĕпе пурнăçне ытларах пĕлес текен, хамăр историе хаклама пĕлекен çамрăксене "Обгоняя время. Евтихий Андреев, председатель в воспоминаниях современников" (Чебоксары-2002) кĕнекепе тĕплĕнрех паллашма сĕнетĕп.

**В. ФЕДОРОВ,**
**Тивĕш шкулĕнчи истори учителĕ.**